26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
9
ВЫРСАРНИКУН
7(6502) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДЮУЩИН ПРИКАЗĔ

### Арми генералне КОНЕВА

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, нимĕçсен вăйлă оборонине татса, паян, январĕн 8-мĕшĕнче, çавăрса илмелли маневра пĕлсе тунипе, Украинăри область тата промышленноçăн пысăк центрне — КИРОВОГРАД хулине — нимĕçсен оборонин питех те кирлĕ пункчĕ пулса тăнăскере тытса илнĕ.

Тăватă кун пынă хаяр çапăçусенче пирĕн çарсем 30 километртан пуçласа 50 километр таран малалла куçнă, фронта 120 километр таран татса сарнă.

Малалла тапăнса пынă çапăçусенче фронт çарĕсем нимĕçсен виçĕ танковăй, пĕр моторизованнăй тата тăватă пехотнăй дивизине сĕмĕрсе тăкнă.

КИРОВОГРАД хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ШУМИЛОВ генерал-полковникăн, ЖАДОВ генерал-лейтенантăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-полковникăн РОТМИСТРОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорăн КАТКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорăн ПОЛОЗКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорăн КИРИЧЕНКĂН танкисчĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн ФОМИНĂН артиллерисчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВĂН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

СЕРЮГИН генерал-майорăн 89-мĕш Гвардейски Белгородски-Харьковски стрелковăй дивизийĕ, ОГОРОДОВ полковникăн 110-мĕш Гвардейски Александрийски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, АНЦИФЕРОВ генерал-майорăн 97-мĕш Гвардейски Полтавски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, КОВТУН-СТАНКЕВИЧ полковникăн 297-мĕш Славянски стрелковăй дивизийĕ, ЛЕБЕДЕНКО генерал-майорăн 50-мĕш Запорожски стрелковăй дивизийĕ, ФЕДОРОВСКИЙ полковникăн 303-мĕш Верхне-Днепровски стрелковăй дивизийĕ, СОРОКИН полковникăн 409-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЛОСЕВ генерал-майорăн 72-мĕш гвардейски Красноградски стрелковăй дивизийĕ, МОРОЗОВ генерал-майорăн 81-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизийĕ, КЛЕПКО полковникăн 25-мĕш танковăй бригади, ПОПОВ полковникăн 31-мĕш танковăй бригади, ЧУМИХИН подполковникăн 170-мĕш танковăй бригади, БОГУНОВ подполковникăн 57-мĕш Полтавски уйрăм танковăй полкĕ, РЯЗАНОВ генерал-лейтенантăн 1-мĕш штурмовой авиаци корпусĕ, ДОБЫШ полковникăн 1-мĕш Гвардейски бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, НЕМЦЕВИЧ полковникăн 205-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, ЗИНОВЬЕВ полковникăн 302-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, артиллери генерал-майорăн ПОПОВИЧĂН 11-мĕш артиллери дивизийĕ, артиллери генерал-майорăн ГУСАРОВĂН 16-мĕш артиллери дивизийĕ, КОТОВ подполковникăн 1000-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ШИЛЬНОВ майорăн 1669-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, КОЗАРЕНКО подполковникăн 115-мĕш Красноградски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ТИХОМИРОВ подполковникăн 678-мĕш гаубицăллă артиллери полкĕ, ЕМЕЛЬЯНОВ майорăн 1543-мĕш хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ, КРАВЧЕНКО подполковникăн 1694-мĕш хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ, РОЖМАНОВ майорăн 263-мĕш минометнăй полкĕ, ФУРАЖЕВ подполковникăн 292-мĕш минометнăй полкĕ, ЧУМАК подполковникăн 97-мĕш Гвардейски минометнăй Хĕрлĕ Ялавлă полкĕ, МЕДВЕДЕВ майорăн 11-мĕш уйрăм Гвардейски минометнăй дивизионĕ, ЦЕПЕНЮК полковникăн 60-мĕш инженерно-сапернăй бригади, СЫЧЕВ майорăн 329-мĕш инженернăй батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КИРОВОГРАД хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăсsuccсене «КИРОВОГРАДСКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăссене çапла чĕнмелле тăвас:
297-мĕш Славянски-Кировоградски стрелковый дивизи,
50-мĕш Запорожски-Кировоградски стрелковăй дивизи,
409-мĕш Кировоградски стрелковăй дивизи,
25-мĕш Кировоградски танковăй бригада,
31-мĕш Кировоградски танковăй бригада,
170-мĕш Кировоградски танковăй бригада,
1-мĕш Кировоградски штурмовой авиаци корпусĕ,
1-мĕш Гвардейски Кировоградски бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,
205-мĕш Кировоградски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
302-мĕш Кировоградски истребительнăй авиаци дивизийĕ
11-мĕш Кировоградски артиллери дивизийĕ,
16-мĕш Кировоградски артиллери дивизийĕ,
1000-мĕш Кировоградски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
1669-мĕш Кировоградски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
678-мĕш Кировоградски гаубицăллă артиллери полкĕ,
1543-мĕш Кировоградски хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ,
1694-мĕш Кировоградски хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ,
263-мĕш Кировоградски минометнăй полк,
292-мĕш Кировоградски минометнăй полк,
97-мĕш Гвардейски Кировоградски Хĕрлĕ ялавлă минометнăй полк,
11-мĕш уйрăм Гвардейски Кировоградски минометнăй дивизион,
60-мĕш Кировоградски инженерно-сапернăй бригада,
329-мĕш Кировоградски инженернăй батальон.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче темиçе хут та чапа тухнă 89-мĕш Гвардейски Белгородски-Харьковски стрелковăй дивизие, 303-мĕш Верхне-Днепровски стрелковăй дивизие, 72-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизие, 81-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизие, 57-мĕш Полтавски танковăй уйрăм полка, 115-мĕш Красноградски истребительнăй противотанковăй артиллери полкне ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе награлăлама тăратас тата 110-мĕш Гвардейски Александрийски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизие, 97-мĕш Гвардейски Полтавски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизие II-мĕш СТЕПЕНЬ СУВОРОВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Танковăй çарсен генерал-майорăн КАТКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорăн ПОЛОЗКОВĂН тата танковăй çарсен генерал-майорăн КИРИЧЕНКĂН çапăçусенче чапа тухнă танковăй соединенийĕсене ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 8-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăран çирĕм хут харăс персе, КИРОВОГРАД хулине ирĕке кăларнă çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, КИРОВОГРАД хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1944-мĕш çулхи январĕн 8-мĕшĕ

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ЯНВАРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 7-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-МĔШ фронт çарĕсем çапла наступлени туса пынă, Ровно облаçĕнчи КЛЕСОВ ятлă район центрне, Житомир облаçĕнчи район центрне—ЯНУШПОЛЬ хулипе. Винница облаçĕнчи КОМСОМОЛЬСКОЕ, ЛИПОВЕЦ, ОРАТОВ ятлă район центрĕсене, Киев облаçĕнчи район центрĕсене—РЖИЩЕВ хулипе тата РАКИТНО ялне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра—ПРИВИТОВ, МАНИ, КРАСНОВУЛЬКА, ОЛЬШАНКА, БАБУШКИ, БЕЙЗЫМОВКА, ГАЛИЕВКА, МАЛАЯ ВОЛИЦА, ОЗАДОВКА, РОДЯНСЬКЕ, ТЕРЕХОВА, БРОДЕЦКОЕ, НАПАДОВКА, СКИТКА, ТЯГУН, БАБИН, ДУБРОВИЦЫ, ОРАТОВКА, ЮШКИВЦЫ, МАЛАЯ БЕРЕЗЯНКА, ЛУКЬЯНОВКА, КИСЛОВКА, СТЕПОК, БОЛКУН, РУССЫ, ОЛЬШАНИЦА, ШПЕНДОВКА, СТАВЫ, ГОРОХОВАТКА, ЧЕРНЯХОВ, СТРИТОВКА, ХАЛЬЧА, УЛЬЯНИКИ ятлă пысăк ялсене тата ЧУДНОВ-ВОЛЫНСКИЙ, ДЕМЧИН, ОРАТОВ, РАКИТНО, ОЛЬШАНИЦА ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ. УКРАИНАРИ 1-МĔШ фронт çарĕсем КИЕВРАН кăнтăртарахра ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма йышăнса тăракан хамăр çарсемпе пĕрлешнĕ.

УКРАИНАРИ 2-МĔШ фронт çарĕсем, арми генералĕ КОНЕВ ертсе пынипе, январĕн 5-мĕшĕнче наступлени пуçласа янă та КИРОВОГРАДЕНЧЕ тăшман оборонине татнă. Виçĕ кун хушши наступлени туса пырса, пирĕн çарсем татса кĕнĕ вырăна 100 километр таран сарнă, малалла 40 километр ытла кĕрсе кайнă, халăх пурăнакан 120 пункта ытла ирĕке кăларнă, çав шутра—КИРОВОГРАД облаçĕнчи АДЖАМКА тата НОВГОРОДКА ятлă район центрĕсене, СУБОТЦЫ, ГРИГОРОВКА, ЧЕРВОННЫЙ ЯР, НОВАЯ АНДРЕЕВКА, КАЗАРНА, ЧЕРНЯКОВКА, ГАЕВКА, ПОКРОВСКОЕ, ЛЮБОНАДЕЖДОВКА, НОВО-ВОДЯНОЕ, МАРЬЕВКА, НОВО-ГРИГОРЬЕВКА, КЛИНЦЫ, КАЛИНОВКА, КОЗЫРЕВКА, ТАРАСОВКА, ОСИТНЯЖКА, ПОДМОГИЛЬНА, СЕВЕРИНКА, БОЛЬШАЯ МАМАЙКА, ГУСТОЙ ГАЙ, НЕПАЛИМОВКА, ПЕРВОЗВАНОВКА, КОНОПЛЯНКА, ОСИКОВАТА, ОБОЗНОВКА, ГРУЗНОЕ, ЗАВАДЬЕВКА, ФЕДОРОВКА ятлă пысăк ялсене тата ТРЕПОВКА, КАНАТОВО, ЛЕЛЕКОВКА ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

КИРОВОГРАД хулине пирĕн çарсем йăлтах хупăрласа илнĕ.

Çапăçусенче нимĕçсен виçĕ пехотнăй, пĕр танковăй тата пĕр моторизованнăй дивизийĕсене аркатса тăкнă. Тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем тÿснĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Январĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 141 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 51 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăçĕсем, Коростеньпе Сарны хушшинчи чугун çул тăрăх куçса пырса, Ровно облаçĕнчи Клесов ятлă район центрне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, хăвăрт малалла куçнă та Житомир облаçĕнчи район центрне—Янушполь хулине тытса илнĕ. Совет танкĕсемпе мотопехота нимĕçсен çав хулана хÿтĕлекен чăçĕсене аркатса тăкнă. Хула шатĕнче нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă 26 танкĕ ларса юлнă. Совет чăçĕсем тата Винница облаçĕнчи Комсомольское, Липовец, Оратов ятлă район центрĕсене йышăнса илнĕ. Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, Киевран кăнтăртарахра Днепр шывĕн сылтăм енĕпе наступлени туса пыраканскерсем, Киев облаçĕнчи район центрне —Ржищев хулине тытса илнĕ те Букрински плацдарма (Днепр шывĕн сылтăм енче, Переяслав-Хмельницкий хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) йышăнса тăракан хамăрăн çарсемпе пĕрлешнĕ. Çавăн пекех тата Киев облаçĕнчи Ракитно ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла тытса илнĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 5.000 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, нумай çынна тыткăна илнĕ. Нимĕçсене 110 танкпа бронемашина, хăй тĕллĕн çÿрекен 14 тупă, 84 хир туппи, 21 бронетранспортер, 200 пулемет ытла тата 300 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн чăçсем нимĕçсенчен темиçе юсавлă танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 6 тупă, 92 хир туппи, боеприпассен 5 складне, хĕçпăшал, апат-çимĕç тата çар пурлăхĕ усракан 34 склада тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем январĕн 5-мĕшĕнче Кировоград енчелле наступлени пуçласа янă. Пирĕн çарсем нимĕçсен оборонине татнă та халăх пурăнакан 120 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра—Кировоград облаçĕнчи Аджамка тата Новгородка ятлă район центрĕсене. Кировоградран çурçĕртерехре кĕрекшекен пĕр соединени чăçĕсем Ингул шывĕ урлă каçнă та, хăвăрт малалла кайса, Грузное ятлă яла тытса илнĕ, Кировоградпа Новоукраинка хушшинчи чугун çула татнă. Еçе малалла ăнăçтарса пырса, пирĕн çамаллăн куçакан чăçсем Лелековка станцине тытса илнĕ, вара çав станциран кăнтăртарахра Кировоград хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ. Çапла вара пирĕн çарсем Кировоград хулине тата çав хулана хÿтĕлекен нимĕç чăçĕсене пĕтĕмпех çавăрса илнĕ. Тăшман пысăк сухату тÿсет. Совет танкисчĕсемпе артиллерисчĕсем паян кăна нимĕçсен 28 танкне, 13 бронетранспортерне тата 40 туппине ытла пĕтерсе тăкнă. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне тăшманăн çапса аркатнă соединенийĕсем çар техникипе çар пурлăхĕ пăраха-пăраха хăвараççĕ. Пирĕннисем нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Крымри партизансен отрячĕ декабрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшманăн бронепоездне сирпĕнтерсе янă. Бронепоезд айккинелле йăванса кайнă. Крымри партизансен тепĕр отрячĕ пĕр яла пырса кĕнĕ те мирлĕ çынсене çаратакан гитлеровецсене тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕçсемпе румынсен 100 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтăн пĕр участокĕнче нимĕçсен 291-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 504-мĕш полкăн икĕ офицерĕпе 135 салтакĕ тыткăна паранна. Обер-лейтенант Гейнц Цинке çапла каласа панă: «Январĕн 2-мĕшĕнче пирĕн полка аркатса тăкрĕç. Полк командирĕ таçта çухалчĕ, эпĕ вара тăрса юлнă салтаксене ертсе пырас ĕçе хам çине илтĕм. Малалла хирĕç тăма ним усси те çуккине пĕлсе çитсен, эпĕ хĕçпăшалсене пăрахса тыткăна паранма хушрăм. Салтаксем çак приказа хаваслансах пурнăçа кĕртрĕç. Эпир вырăссене 16 пулемет, 105 винтовка тата боеприпассем нумай илсе килсе патăмăр».

* * *

Аяларах нимĕçсем Полесье облаçĕнчи Гута ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕç захватчикĕсем ялти çынсене питĕ тискеррĕн тыткаларĕç. Гитлеровецсем мирлĕ пурăнакан çынсене хăйсен çуртĕсене хăваласа кĕртетчĕç те çав çуртсене вут тĕртетчĕç. Вутра Анна Бондарь, Александра Жолудь, Ольга Дасько тата ытти çитĕннĕ çынсемпе ачасем нумай çунса кайрĕç.

Эпир Хĕрлĕ Çар боецĕсене совет çĕрĕ çинче нимĕç ирсĕрĕсем тунă мĕнпур тискер ĕçсемшĕн вĕсене тавăрма ыйтатпăр».

Акт çине çаксем алă пуснă: Тит Дасько, Клавдия Дасько, Лидия Галушкевич, Софья Дасько тата Гута ялĕнчи ытти çынсем.

### Çĕнĕ гимнăн сăввипе кĕввине пичетлесе кăлараççĕ

Ленинградра халăха Совет Союзĕн çĕнĕ гимнĕпе паллаштараççĕ. Хулан Приморски районĕнче гимнăн сăввине ятарласа тунă витринăсем çине çакаççĕ. Хор кружокĕсем пурте çĕнĕ гимна вĕренме пуçланă.

«Искусство» ятлă издательствăн Ленинградри отделенийĕ гимнăн сăввипе кĕввине илемлĕ плакатсем çине, илемлĕ открыткăсем çине тата листовкăсем çине пичетлесе кăларать. Граммофон пластинкисем тăвакан фабрика Совет Союзĕн çĕнĕ гимнне пластинкăсем çине ÿкерсе кăларма хатĕрленет. (ТАСС).

## Информациллĕ пĕлтерÿ

ÇАК КУНСЕНЧЕ ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН XVII ПЛЕНУМĔ ПУЛСА ИРТРĔ.

ПЛЕНУМ ÇАК ЫЙТУСЕНЕ СÿТСЕ-ЯВРĔ:

1. 1943 ÇУЛХИ ЯЛХУÇАЛĂХ ÇУЛĔН ИТОГĔСЕМПЕ 1944 ÇУЛХИ ÇУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНЕС ТĔЛĔШРИ ЗАДАЧĂСЕМ ÇИНЧЕН (ДОКЛАДЧИКĔ — ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ МАТВЕЕВ ЮЛТАШ).

2. 1943 ÇУЛТА ВКП(б) РЕТНЕ ИЛНИН ИТОГĔСЕМ (ДОКЛАДЧИКĔ — ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН СЕКРЕТАРĔ БЕЛКОВ ЮЛТАШ).

3. ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИ ÇИНЧЕН (ДОКЛАДЧИКĔ — ЧĂВАШ АССР ÇĔРĔÇ ХАЛĂХ КОМИССАРĔ МАЛОВ ЮЛТАШ).

ПЛЕНУМ ПУР ЫЙТУСЕМ ТĂРĂХ ТА ТИВĔÇЛĔ РЕШЕНИСЕМ ЙЫШĂНЧĔ.

ВКП(б) ОБКОМĔ

## ВКП(б) Обкомĕн пленумĕнче

ВКП(б) Обкомĕн XVII пленумĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. М. Матвеев юлташ 1943 çулти ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1944 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшри задачăсем çинчен доклад турĕ.

Матвеев юлташ çакна палăртрĕ: республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнăскерсем, ялхуçалăх çулĕнчи мĕнпур ĕçсене ăнăçлăн вĕçлерĕç, государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртрĕç, унсăр пуçне 1944 çулхи натуроплатăшăн тата Хĕрлĕ Çар фондне аванс шучĕпе 105 пин пăт тырă парса хучĕç. Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладне ответлесе, Чăваш республикинчи колхозсемпе колхозниксем 10 кун хушшинче государствăна 2 миллион та 500 пин пăт тырă сутнă, ăна январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе панă. Республикăри колхозсем государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ăнăçлăн пурнăçланă, ĕне-выльăхсен хисепне 25 процент, сыснасен хисепне 13,2 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 28 процент чухлĕ ÿстернĕ.

Докладчик кунпа пĕрлех иртнĕ ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсенчи çитменлĕхсене те çивĕччĕн критиклерĕ, уйрăмах Пăрачкав, Шăмăршă, Чкаловски, Кувакино, Первомайски тата Улатăр районĕсене критиклерĕ.

Иртнĕ çулта колхозсем уйхир ĕçсене халиччен хинчен чылай маларах туса пĕтернĕ пулин те, республикăра çитес çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Чылай районсенче халĕ те вăрлăхсене хывса çитермен, вăрлăх тасатас ĕçе тата вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслес ĕçе начар организацилене. Вăрлăх хатĕрлес ĕç уйрăмах Шăмăршă, Пăрачкав, Чкаловски, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Канаш районĕсенчи колхозсенче начар пулса пырать.

Лашасене кÿлсе çÿремелли ялхуçалăх инвентарĕпе транспорт хатĕрĕсене юсас ĕç те начар пулса пырать, агротехникăллă мероприятисен планĕ сÿрĕккĕн пурнăçа кĕрсе пырать, колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене хатĕрлес тата колхозниксене агротехникăна вĕрентес ĕçсем те çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ райçĕрĕç пайĕсене çителĕксĕр пулăшса пырать.

Матвеев юлташ çуракине хатĕрленес тĕлĕшри задачăсем çинче тĕплĕн чарăнса тăрать.

Матвеев юлташăн доклачĕ тăрăх пренисенче 14 çын тухса каларĕç.

1943 çулта ВКП(б) ретне илнин итогĕсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Н. И. Белков юлташ доклад туса пачĕ.

1943 çулта республикăри парти организацийĕ партине пурĕ 4464 çынна илнĕ, çакă вăл иртнĕ çулта илнинчен икĕ хут ытларах.

Анчах республикăри хăшпĕр парторганизацисем ĕççыннисен патриотла пысăк çĕкленĕвĕпе усă курма, вĕсен партине кĕрес туртăмĕпе усă курма пултараймарĕç, парти ретне çĕнĕ членсемпе кандидатсем илес енĕпе çителĕксĕр ĕçлерĕç. Уйрăмах кунта ВКП(б) Канаш, Калинино, Элĕк, Красноармейски, Ишлей, Чкаловски, Кувакино райкомĕсем начар ĕçленĕ.

Хăшпĕр ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсем партие çĕнĕрен илнĕ çынсен идейăпа политикăллă шайне ÿстерес тĕлĕшпе саплипех çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Республикăри парторганизацин задачи — партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсене малашне те лайăхлатса пырасси пулать, — тет докладчик. Партие малта пыракан çынсене, ĕçре тĕрĕсленĕ çынсене илес пулать.

Белков юлташăн доклачĕ тăрăх пренире 13 çын тухса калаçрĕç.

Пленумăн кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйтупа — тракторсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Н. Г. Малов юлташ доклад турĕ.

Докладчик 1943 çулта пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри машинно-тракторнăй станцисем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Çакă вăл нумай МТС-сем хăйсен тракторĕсемпе ялхуçалăх машинисене начар юсанипе килнĕ. Апла пулин те Кувакино, Улатăр тата Пăрачкав МТС-ĕсен руководителĕсем çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман, çавăнпа вĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисем юсас ĕçе кăçал та начар тăваççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе МТС-сен директорĕсем тракторсене юсас ĕç валли кирлĕ запаслă пайсене çителĕклĕн парса тăрас тĕлĕшпе мĕнпур мерăсене йышăнман. Канашри вагонсем юсакан завод, Улатăрти паровозсем юсакан завод тата Власов, Якунин, Челноков юлташсем, главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсен руководителĕсем, тата çав районсенчи ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем тракторсем валли запаслă пайсем тума çирĕплетсе панă задание пурнăçламан, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн постановленине пурнăçа кĕртмен.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас тата вĕсем валли запаслă пайсем туса кăларас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн кĕрешсе, социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла.

Малов юлташăн доклачĕ тăрăх пренире 11 çын тухса калаçрĕç.

Пленум хупăнас умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

Партин республикăри организацийĕ, терĕ Чарыков юлташ, Сталин юлташ ялхуçалăхĕ умне каларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн 1943 çулта çине тăрса ĕçлерĕ. Эпир начар мар ĕçлерĕмĕр. Анчах республикăн хальхинчен чылай ытларах ĕçлеме пур майсем те пулнă. Чи малтанах иртнĕ çулта юлса пыракан чылай районсене — Шăмăршă, Пăрачкав, Кувакино районĕсене, вĕсене ВКП(б) Обкомĕпе республика Совнаркомĕ питех те вăйлăн пулăшса тăнă пулин те, йĕркеллĕ ĕçлекен тăвайман. Çак районсен руководителĕсем хăйсен ĕçне начар йĕркелесе пыраççĕ, пур ĕçсене те кирлĕ пек тĕпчесе вĕренмеççĕ, вĕсем халĕ те республикăри работниксем çав районсене кайса вĕсен ĕçĕсене туса пырасса шанса пурăнаççĕ. Вĕсем час-часах вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем çине переççĕ, анчах çав йывăрлăхсем халĕ Пăрачкав, Кувакино тата Шăмăршă районĕсенче çеç-и вара? Йывăрлăхсем çинчен сахалтарах калаçас пулать, йывăрлăхсене çĕнтерме районсем пур пек мерăсене те йышăнас пулать.

ВКП(б) райкомĕсем кадрсемпе ĕçлессине лайăхлатма тивĕçлĕ, колхозсен председателĕсене суйласа лартасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Партипе комсомол ретне илес ĕçе большевикла йĕркелесе пулать, партипе комсомол ретне малта пыракан çынсене илмелле, актив хушшинче анлăн ĕçлемелле.

Чарыков юлташ, Чăваш республикинчи заводсем МТС-сем валли запаслă пайсем туса кăлармалли плана хăвăртрах пурнăçа кĕртме кирлине палăртса, çак кирлĕ ĕçе хуллен кăна пуçăнакан чылай заводсен директорĕсене çивĕччĕн критиклет. Чарыков юлташ парти райкомĕсемпе райисполкомсем нумайĕшĕ чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртать, республикăри партипе совет организацийĕсене çÿлте асăннă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме чĕнет.

Хăйĕн сăмахне вĕçлесе, Чарыков юлташ Чăваш республикинчи большевиксене пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, геройла Хĕрлĕ Çара нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре малашне тата та вăйларах пулăшса тăма чĕнчĕ.

# Çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтерер

Большевиксен партийĕпе Совет Правительстви колхозри выльăхсен хисепне ӳстерес пысăк ыйтăва условисем туса панă. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсенче совхозсенче выльăхсен йышне тата вĕсен продуктивноçне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пирĕн колхозсемшĕн çĕç программи пулса тăрать.

Пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли иртнĕ çулсенчи планĕсене анăçлăн пурнăçласа пынă вăхăтра, икĕ çул хушшинче, майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 75 процент, сыснасен хисепĕ 45 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 123 процент ӳснĕ. 1943 çулта майракаллă шултăра выльăхсен хисепне 24,9 процент, сыснасен хисепне 13,2 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 28,5 процент ӳстернĕ.

Республикăри нумай районсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана анăçлăн пурнăçларĕç. Выльăхсем ĕрчетесси уйрăмăнах Элĕк районĕнче лайăх пулса пырать. Çав районра майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 40 процент, сыснасен хисепĕ 20 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 30 процент ӳснĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем майракаллă шултăра выльăхсен хисепне 42 процент, сыснасен хисепне 28 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 30,5 процент чухлĕ ӳстернĕ.

Выльăхсене ĕрчетес ĕçĕн анăçлăхĕ çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтерме пĕлнинчен килет. Выльăхсен пахалăхне тата вĕсен продуктивноçне ӳстересси те çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтернинченех килет. Çакна шута илсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем çамрăк выльăхсемшĕн вĕсем çураличчененех тăрăшма тытăнаççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхозăн паллă стахановки Вазикова юлташ, фермăра 10 çул ытла ĕçлекенскер, çамрăк выльăхсене ялан лайăх пăхса çитĕнтерет. Вăл хăйне çирĕплетсе панă сысна çурисене мăнтăр пăхса ӳстерет. Вазикова юлташ нумай çулсем хушши ĕнтĕ кашни сысна аминчен 19—20 çăвăр илет тата вĕсене яланах аван çитĕнтерет. Колхоз çулран-çул выльăх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарса пырать.

Паллах, Вазикова юлташăн ĕçĕнче темĕнле «вăрттăнлăхсем» çук ĕнтĕ. Кашни сысна çурине юратса пăхни, фермăри тасалăх тата зоотехникăна пăхăнса пыни,—çаксем унăн ĕçĕн меслечĕсем.

Çамрăк выльăхсем, вĕсене пăхса илес тата çитĕнтерес ĕçре пуриншĕн те паллă правилăсене пурнăçласа пыман пирки, йĕркеллĕ пăхман пирки, витесене таса та тирпейлĕ тытман пирки вилеççĕ. 1943 çулта Кувакино, Первомайски, Шупашкар, Çĕмĕрле районĕсенче çамрăк выльăхсем чылай вилчĕç. Тавай районĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозра, начар пăхса усранă пирки, 3 пăру вилнĕ, Шăхасан районĕнчи „Красный луч" колхозра 5 тиха вилнĕ. Çак районти „Красное Сормово" колхозра çамрăк выльăхсене усрама йĕркеллĕ витесем çук.

Чылай колхозсенче пăрусене тăрантарнă чухне сĕт мĕнле температурăллă пулни çине çаврăнса пăхмаççĕ. Çамрăк пăрусем тата сысна çурисем пурăнакан çуртсене уçăлтармаççĕ, тĕрлĕ шĕвексем витерен юхса тухмаллисене туман. Çапла вара витесенче яланах чĕрĕ сывлăш тата йĕпе тăрать. Паллах, çавăн пек витесенче çамрăк выльăхсем час-часах чирлеççĕ, имшерккеленеççĕ.

Çамрăк выльăхсене лайăх çитĕнтерес ĕçре витесене таса тытни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пăрусене, сысна çурисене апат паракан влашкасем (кормушкăсем) яланах таса пулмалла, апат çитермелли е ĕçтермелли йĕркене пăхăнса тăмалла, кирлĕ вăхăтра минераллă апатсем те памалла.

Çакăнта зоотехниксемпе ветеринарсен тивĕçлипе ертсе пымалла та ĕнтĕ. Вĕсен тивĕçĕ—фермăсенче йĕркелĕх тăвасси пулать. Кашни фермăрах çамрăк выльăхсем йĕркеллĕ тата пĕтĕмпех çитĕнчĕр тесен, ферма витисене кирлĕ. пек йĕркелемелле. Витесенче çута та таса пулмалла, вăхăтран-вăхăта витери пăчă е нӳрлĕ сывлăша уçăлтармалла, тĕрлĕ шĕвексене юхса тухма канализаци тумалла. Çаксене пурнăçласа пымасан—выльăх-чĕрлĕхсене ĕрчетме тата пур çамрăк выльăхсене те пăхса çитĕнтерме май çук.

Выльăхсен витисене çĕнĕрен тăвассине тата кивисене çĕнетсе лайăхлатассине пит пысăк хăвартлăх мар. Вăрçă интересĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине хăвартрах ӳстерме, аш-какай, çу тата ытти продуктсене ытларах парасса тăма хушаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтересси пĕтĕм те ответлă задачи пулса тăрать.

Çамрăк выльăхсене пăхса илес кĕрӳ вăхăт пуçланчĕ. Халĕ ĕнтĕ фермăсенче сыснасем çăвăрлама, сурăхсем, ĕнесем пăрулама пуçлаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планри тапхăр ответлă вăхăт пулса тăрать. Хаяххăн çуркуннехи уйăхсенче çамрăк выльăхсене çитĕнтерес ĕçре йĕркеллĕ пăхса ирттерме пурне те тума çук.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пурнăçлас тесен, чăн малтанах, пур колхозсенче те пăрусене, сысна çурисене, сурăхсемпе качака путеккисене пĕр çухатусăр пĕтĕмпех çитĕнтерес пулать. Çакă вăл малта пыракан колхозсен кăна мар, мĕнпур колхозсемпе фермăсен задачи пулса тăрать. Çакна пурнăçлас ĕçе мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен хутшăнмалла. Чăн малтанах, выльăхсене пăхма шанчăклă, та опытлă çынсене уйăрмалла. Уйрăмăнах пăруламалли ĕнесене, çăвăрламалли сысна амисене тĕплĕн асăрхаса тăмалла. Çамрăк выльăхсене—пăрусене, сысна çурисене, путеккисене ăшă та çутă витесенче усрамалла.

1943 çулхи çуллахи уйăхсенче пирĕн колхозсенчи фермăсем 21.000 пуç майракаллă шултăра выльăх, 26 000 сысна тата сурăхсем нумай гуянчĕç. Вĕсен хисепĕнче, пуринчен ытла, çамрăк выльăхсем. Вĕсене лайăх тата юратса пăхас пулать. Çамрăк выльăхсемшĕн тăрăшни — колхозри фермăн пуласлăхĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тăрăшни пулать. Çакна шута илменни — вăл выльăхсене ĕрчетес ĕçе сиен кӳни тата государство умĕнче айăпа кĕни пулать.

Çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес ĕçе вĕсене пăхакансем татса параççĕ. Вĕсем çак ĕçе юратнинчен тата ответлăха туйса илнинчен ĕçĕн анăçлăхĕ килет. Çавăнпа та фермăсенче ĕçлекенсене куллен пулăшса пымалла, вĕсен мухтава тивĕçлĕ ĕçне хаклама пĕлмелле, вĕсене ĕçлеме пур условисем те туса памалла.

Çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес ĕçре, паллах, ĕçкунĕ çумне хушса тӳлемелли йĕрке пысăк вырăн йышăнса тăрать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан çĕршер работниксем 1943 çулта выльăх продуктивноçне ӳстерес плана ытлашшипех пурнăçларĕç. Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхозра пăрусене пăхакан А. И. Белорусова юлташ 25 пăру пăхса çитĕнтернĕ, вăл пăхакан пăрусем кулленех 603 грамм хутшăннă. Ишлей районĕнчи „Ыраш" колхозри сысна пăхакан Кулькова юлташ 8 сысна аминчен план тăрăх 88 çурă илес вырăнне 135 çурă илнĕ. Çапла вара, Кулькова юлташ хăйĕн тава тивĕçлĕ хисеплĕ ĕçĕшĕн ĕçкунĕ çумне хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, 11 сысна çури илет. Красноармейски районри „XII лет Октября" колхозри конюх Романов юлташ 58 кĕсререн 58 тиха илнĕ, Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозри сурăхсем пăхакан М. Волкова юлташ 100 сурăхран 141 пӳтек илсе çитĕнтернĕ. Сĕнтĕр районĕнчи „Свобода" колхозри сыснасене пăхакан А. Семенов юлташ 8 сысна аминчен 150 çурă илсе, вĕсене пĕтĕмпех çитĕнтернĕ. Семенов юлташ хăйĕн паха ĕçĕшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 13 сысна çури илет.

Ĕçкунĕ çумне хушса тӳлемелли йĕркене пурнăçласа пыни фермăсенче ĕçлекенсен хушшинче малта пыракансен шутне ӳстерет. Анчах та уйрăм колхозсен руководителĕсем хушса тӳлессине ним сăлтавсăр тăсса пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан çынсен ĕçри паха опычĕсемпе ытти колхозниксене паллаштармаççĕ.

Колхоз фермисенче ĕçлекенсемшĕн чи хĕрӳллĕ тапхăр пуçланчĕ. Халĕ вĕсем фронтпа çĕршыв умĕнче пысăк ответлă экзамен тытаççĕ. Вĕсен çĕршыва аш-какай, сĕтçу, тир-сăран ытларах памалла, çапла вара гитлерла йытă-кĕтĕвĕсене аркатса пыракан хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пулăшмалла.

А. МИТРОФАНОВА.

## Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Чулкаçри «Смычка» колхозра кăçал ялхуçалăх ĕçĕсенче ĕçлеме вăкăрсене вĕрентеççĕ. Терентьевпа Медведев колхозниксем 6 вăкăра ĕçе кӳлме вĕрентрĕç те ĕнтĕ. Халĕ вĕсемпе уй-хире тислĕк кăлараççĕ, ферма валли выльăх апачĕсем кӳреççĕ.

Юнтапари «Алмаз» колхоз членĕсем те 5 вăкăра ĕçе кӳлме вĕрентрĕç.

# Алăстаççен ĕçпе пурнăç условийĕсене лайăхлатмалла

СĔНТĔР («Чăваш Коммуни» корр.). Ильинкăри «Волга» промартель йăлтах ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлет. Унăн халăха кирлĕ япаласене ытларах туса кăларма, ӳсе пыракан хăвăртлăхсемпе ĕçлеме питех те лайăх майсем пур. Анчах артель çителĕклĕ ĕçлемест-ха, производствăра унăн тăтăшах кăлтăксем пулаççĕ. Çак кăлтăксем алăстаççене ĕçлеме условисем туса паманнинчен чылай килеççĕ.

Артелĕн цехсем валли те, алăстаççене пурăнма та çурт-йĕрсем çителĕксĕр. Хăшпĕр цехсем уйрăм çынсен çурчĕсенче вырнаçнă. Атă-пушмак юсакансем икĕ çуртра ĕçлеççĕ. Вăл çуртсен пӳлĕмĕсем пĕчĕккĕ, алăстаççене тухăçлăн ĕçлеме май çук. Таса сывлăш çитмен пирки, вĕсем часах ывăнаççĕ, ĕçре пĕрмаях чăрмавсем кураççĕ. Çитменнине алăстаççем çавăнтах вырăнса тăраççĕ.

—Кун пек çĕрте ĕçлеме питĕ кансĕр. Ĕç пӳлĕмĕ анлăрах пулсан, пурăнма общежити пулсан, хальхинчен чылай тухăçларах ĕçлемелле,—теççĕ атă-пушмак юсакансем.

Халăх умĕнчи тивĕçлĕхе туйса, вĕсем халь те тăрăшсах ĕçлеççĕ. Мастер Е. Калинин юлташ атă-пушмака нормăран икĕ хут хăвăртрах юсать. Паллах, ĕç условисене лайăхлатсан, татах та тухăçларах ĕçлеме пултармалла вăл.

Октябрь уйăхĕнче артель çăматă йăвалакан производство организацилерĕ. Питех те вырăнлă пуçару. Анчах артель руководителĕсем çăматă йăвалакансене те кирлĕ пек условисем туса паман. Ĕç пӳлĕмĕ пĕчĕккĕ, çутă çитмест. Пӳлĕм стенисемпе маччи шыв пăсĕпе йĕпенсе тăраççĕ. Ĕçе тытăнсанах пӳлĕме пăс тулса ларать те кăшт тăхтасан алăри япала та курăнми пулать. Йăваланă çăматăсене, сушилка çук пирки, çавăнтах типĕтеççĕ.

Кун пек çĕрте, паллах, йĕркеллĕ ĕçлеме май çук. Çăматă йăвалакансене ĕçлеме юрăхлă условисем халех туса памалла.

Кăна тума артелĕн май пур. Техноруку А. Федорова юлташ çăматă йăвалакан цеха тепĕр çурта куçарасшăн. Вăл çурт аван. Ăшă тытмалла туса, оборудованисене вырнаçтармалла кăна. Анчах правлени председателĕ С. Кабуркин темшĕн техноруку сĕнĕвĕпе килĕшмест. Кам та пулин çĕнĕ çурт лартса парасса кĕтет пулмалла.

Кунта алăстаççем хушшинчи массăллă-ăнлантарулăх ĕçе те начар йĕркеленĕ. Агитаторсемпе вулаканçăсем тĕнчери лару-тăру, Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен алăстаççене ăнлантарса памаççĕ. Рабочисем çĕнĕ хыпарсене урамра илтнĕ тăрăх çеç пĕлеççĕ. Артель республикăра тухакан хаçатсене пĕр экземпляр çеç илсе тăрать. Ăна та пулин рабочисене вуласа кăтартмаççĕ, хаçат артель правленийĕнчех пĕтет. Стена хаçатне тахçан пĕр номер кăларнă та, халĕ ун пирки шарламаççĕ те.

«Волга» артель Матикассинчи «Кожевник» артельпе ăмăртать. Анчах ăмăрту—хут çинче çеç. Ку таранччен ăмăрту договорне пĕре те тĕрĕслемен. Алăстаççем хушшинче те ăмăрту çук. Мĕншĕн тесен алăстаççем обязательствăна мĕнле пурнăçа кĕртнине правлени енчен тĕрĕслесе тăмаççĕ. Хăш чухне тата вĕсен кулленхи ĕçне те шута илмеççĕ. Лайăх ĕçлекенсене мухтаса хавхалантарни, юлса пыракансене питлени çук. Мастерсем кам мĕнле ĕçленине чухлаççĕ, анчах правлени руководителĕсем кун çинчен çиĕнчех пĕлмеççĕ.

— Кашни рабочи хăйĕн кулленхи нормине мĕнле тултарнине çырса пыракан работник çук пирĕн, — теççĕ вĕсем.

Артель правленийĕн кулленхи ыйтусене тĕрĕс татса парса, ĕçе уçăмлăн ертсе пымалла, алăстаççене ĕçпе пурнăçăн лайăх условийĕсене туса памалла. Çак çитменлĕхсене пĕтерсен, артель коллективĕ хальхинчен лайăхрах ĕçлесси паллах.

Т. ИВАНОВ.

## Художествăллă пултарулăхăн смотрĕ

КУКЕÇ. Районра, художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленнĕ май, чылай çĕрте çĕнĕрен кружоксем организациленĕ. Район центрĕнче струннăй оркестр тата хор кружокĕ тунă. Пĕчченшерĕн тухса юрлакансемпе ташлакансем те пур. Халиччен вĕсем хăйсен пултарулăхне сцена çинче 5 хутчен кăтартнă.

Çавăн пекех район центрĕнчи ачасен çуртĕнче те художествăллă пултарулăх кружокĕ пур. Унта 100 ача яхăн шутланать. Вĕсем халĕ тĕрлĕрен пирамидăсем тума, массăллă ташăсем ташлама, çĕнĕ юрăсем юрлама вĕреннĕ. Кружока ачасен çурчĕн директорĕ Москаленко юлташ ертсе пырать.

Хыркассинчи туллимар вăтам шкулта, Платкари пуçламĕш шкулта тата Çĕньялти интернатра та художествăллă пултарулăх смотрне начар мар хатĕрленнĕ.

* * *

КАЛИНИНО, январĕн 7-мĕшĕ (Телефонпа). Ассакассинчи туллимар вăтам шкулти художествăллă пултарулăх кружокĕ смотрта «Емĕт» пьесăна лартса пачĕ. Спектакльре Т. Степанова, Д. Дмитриев, А. Михайлова тата В. Михайлов вĕренекенсем хăйсен рольĕсене лайăх вылярĕç.

Çавнашкалах Калининăри педагогика училищинчи художествăллă пултарулăх кружокĕн членĕсем В. Пяховская, В. Ландышев тата К. Попова вĕренекенсем питĕ лайăх ташларĕç.

## Çамрăксем валли лекцисем

Мускаври ученăйсен çуртĕнче вăтам шкулсен 10-мĕш класĕсенче тата ВУЗ-семпе ВТУЗ-сен пĕрремĕш курсĕсенче вĕренекенсем валли лектори уçăлнă. Унта наука, культура тата искусство ыйтăвĕсемпе Капица, Ферсман, Шмидт академиксем, Наука академийĕн член-корреспонденчĕ Минц тата ытти ученăйсем те лекцисем вулаççĕ. (ТАСС).

# ГАЛЯ

Пĕр ял тавра тăшман темиçе мина хирĕ туса хăварнă. Çав хăрушă вырăнсене кĕске срокра тасатма лейтенант мана виçĕ сапер пачĕ.

Ку хăрушă вырăнсене мина шырамалли хатĕрпе шыраса çӳрес пулсан, эпĕ задачăна вăхăтра пурнăçа кĕртейрес çук. Кун пек чухне мана, вăтă сапера, нимĕçрен çăлăнса юлнă ял çыннисем çул кăтартса параканччĕ. Эпĕ халь те вĕсемпе каласса пăхас терĕм. Эпир суннă пӳрт пĕрени çинче канса ларакан ватă украинец патне пырса сăмах пуçларăмăр. Анчах мучей нимĕн те пĕлмест иккен.

— Эпĕ нимĕçсем куинта чухне нӳхрепрен те тухман. Нимĕнле мина та курман, — терĕ вăл.

Çак вăхăтра улмуççисем хушшинчен пĕр вунă-зунпĕр çулхи хĕрача тухрĕ те пирĕн çине тинкерсе пăхрĕ, вара çапла каларĕ:

— Эпĕ нимĕçсем минăсем ăçта лартнине йăлтах пĕлетĕп. Кирлĕ пулсан, сире пĕтĕмпех кăтартса парам.

— Кăтартса пар, кăтартса парах, хĕрĕм,—терĕм те эпĕ, çавăнтах ура çине тăтăм.

Хĕрача пире урам урлă, анкартисем витĕр илсе кайрĕ, униче евĕрлĕ çеремлĕ хире илсе тухрĕ.

— Веç ав çавăнта нимĕçсем икĕ машина çавракa минăсем илсе килсе тăкрĕç. Унтан нумайччен кĕрепçемле чаврĕç.

Эпĕ малалла пĕр вунă утăм пусрăм та нимĕçсем чее маскировка туса хăварнă шăтăка асăрхарăм. Шăтăка асăрханса уçатăп. Анчах ку шăтăка мина взрывателĕсен пушă коробкисене çеç пытарса хăварнă мĕн. Анчах çак коробкăсем—минăсем сывăхрах иккенне кăтартакан пĕрремĕш паллăсем. Пĕр сапера миноискатель тыттартăм та ĕçе тытăнма хушрăм. Хам хĕрачапа пĕрле ытти мина хирĕсене шырама карăм.

Хĕрача, çулне кура мар, ăслă та таранăт чĕлхеллĕскер пулчĕ. Вăл мана, ыйтмасăрах, хăй Галя ятлă пулнине пĕлтерчĕ.

Эпир униче евĕрлĕ хир урлă каçрăмăр, нимĕçсен оборона районĕ тăрăх утрăмăр.

— Авă çав блиндажран вĕсен офицерĕсем вырăссене сăнатчĕç. Çав çӳл тӳпере вĕсен виçĕ пулемет ларатчĕ. Лапамра—минометсемпе тупăсемччĕ. Вĕсен пехота çукпа пĕрех. Пĕтĕм оборонăна пулеметсемпе тупăсем анчах тытса тăратчĕç.

Галя çар çынни чĕлхипе ăслăн калаçни, унăн кашни сăмахĕнчи çилĕпе тарăху мана тĕлĕнтерсе пăрахрĕç. Анчах эпĕ унăн сăмахĕсене пӳлес темерĕм.

— Вĕсен часовойĕсем çĕрĕпе çывăрмаççĕ. Питĕ хăравçă çынсем вĕсем. Кашни хĕрарăм партизанка пек туйăнать вĕсене, кашни арçын вырăс разведчикĕ пек туйăнать. Мăн çынсенчен анчах та мар, ачаллăчасенчен те хăратчĕç. Хăйсем мĕн ĕçленине ниепле те сăнама памастчĕç. Ун пек интереслĕнекенсене персе пăрахнисем те сахал мар. Анчах эпĕ çав-çавах вĕсене йĕрлеме тăрăшрăм...

— Мĕншĕн çав тери тăрăшрăн эсĕ? Е хытă кӳрентерчĕç-и вĕсем сана?

— Кӳрентернипе мĕнĕ — паллă ĕнтĕ. Малтанах вĕсем пирĕн чăхсене кӳпсе ячĕç. Унтан ĕнене илсе кайма пычĕç. Атте ĕнене парасшăн пулмарĕ. Вĕсем ăна персе пăрахрĕç. Юлашкинчен, хăйсем каяс умĕн, кил-çурта çунтарса ячĕç. Анне тахçанах вилнĕ манăн. Халь эпир асатте иккĕнех тăрса юлтăмăр. Çакăншăн эпĕ вĕсене тавăрма пултăм. Сирĕн туппăрсем кунта çитсе çурăла пуçласанах, тӳрех сирĕн пата чупрăм. Хам пĕлнисене пĕтĕмпех каласа патăм ĕнтĕ...

— Маттур эсĕ, хĕрачам, маттур. Мина хирĕсене кăтартса пани—пирĕншĕн питĕ усăллă. Эпир вĕсене часрах тасатса тухăпăр та малалла кайăпăр.

—Нимĕçсене пулах эпĕ ку таранччен хут пĕлмесĕр пурăнатăп. Вĕреннĕ пулсан, кăçал виççĕмĕш класра пулмалла...

Эпир Гальăпа пĕтĕм хирсене йĕрлесе тухрăмăр. Самаях утма тиврĕ. Галя мана ултă мина хирĕ кăтартса пачĕ. Ывăнчĕ пулас. Хирсене тупса пĕтерсен, эпĕ ăна яла ăсатса ятăм. Уйăрăлнă чухне пуçĕнчен шăлса ачашларăм. Галя макăрса ячĕ, мана хăйĕн ашшĕшĕн нимĕçсене тавăрма ыйтрĕ. Манăн чун хуçăлчĕ, çилĕ вĕрĕсе килчĕ. Эпĕ хамăн юлташсем патне кайрăм та тата вăйлăрах тăрăшса ĕçлеме тытăнтăм.

Сапер В. АХТУБАЙ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

# РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

**Ӳкерчĕк çинче:** Елчĕк районĕнчи Гаязов юлташ председатель пулса тăракан «Марс» колхозăн витисем.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

## ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШНИ

Якунин юлташ глазнăй инженер пулса ĕçлекен заводри профсоюз комитечĕ фронтовиксен çемьисене куллен пулăшса тăрать. Иртнĕ çулта вĕсене 35 пин тенкĕ укçа, 200 кубометр вутă тата ытти япаласем парса пулăшнă.

## ТАВАН ЧĔЛХЕНЕ ТĔПЧЕÇÇĔ

Чăвашсен государство педагогика институтĕнчи литература кружокĕн членĕсем нумай пулмасть отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче чăваш чĕлхи мĕнле аталанса пыни çинчен доклад итлерĕç. Чăваш чĕлхине вĕренес шутпа институт преподавателĕсене тата вăл ыйтупа интересленекен студентсене ялсене командировкăна яма палăртнă.

## ĔÇШĔН ХУШСА ТӲЛЕНĔ

Куславкка районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ çулсеренех ӳсет. Иртнĕ çулта сысна фермине ĕçлекен Архипова юлташ 141 сысна çури, сурăх ферминче ĕçлекен Филиппова юлташ 25 сурăхран 25 путек çитĕнтернĕ. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, Архипова 17 сысна çури, Филиппова 1 килограмм çăм, фермăсенчи ытти работниксене 225 литр сĕт панă.

## ТĂЛĂХА ЮЛНĂ АЧАСЕНЕ УСРАМА ИЛЕÇÇĔ

Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисемпе инженерлă-техникла работниксем тăлăха юлнă ачасене хăйсен çемьисене илеççĕ. Молотобоец Николай Кравчукпа унăн арăмĕ тăлăха юлнă икĕ ачана хăйсен çемьине йышăннă. Коммуналлă отделăн бухгалтерĕ В. И. Кириллов юлташ 5 çулхи ачана усрама илнĕ. Тăлăха юлнă ачасене усрама илекенсем татах та нумай. Вĕсем çемьене йышăннă ачасене тăванла юратса ӳстереççĕ.

## ШКУЛ АЧИСЕН «СМЕНА» СПОРТ ОБЩЕСТВИ

Красноармейски районри Упири вăтам шкулта шкул ачисен «Смена» спорт обществине организациленĕ. Унта йĕлтĕр спорчĕн, çăмăл атлетика тата гимнастика секцийĕсем пур. Вĕсем шкул ачисене йĕлтĕрпе çӳреме тата çăмăл атлетикăпа гимнастикăна вĕренес ĕçе йĕркелесе пыраççĕ.

## ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

Осоавиахимăн Шăхасан районĕнчи Ӳйкас Кипек ялсовечĕ çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Нумай пулмасть вăл 98 çынна 110 сехетлĕ программăпа вĕрентсе кăларчĕ. Çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе туллимар вăтам шкулăн военрукĕ Архипов юлташ активлăн ĕçлет.

# Ют çĕршывсенче

## Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем юрлă тусем урлă наступлени туса пынă. Са-Витторе местечкин умĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче Инди чаçĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Январĕн 6-мĕшĕнче истребитель-бомбардировщиксем тăшманăн Вăта çĕр Италири объекчĕсене атакăланă.

## Союзниксен авиацийĕ Киле, Штеттина тата Бордопа Берлин çывăхĕнчи аэродромсене атакăлани çинчен тĕплĕнтерех пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: Киле тапăннă хыççăн таврăннă летчиксем каланă тăрăх, çав хулара вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсен тĕтĕмĕ питĕ çӳле хăпарнă, вăл 50 мильăран та курăннă.

Штеттина тапăннă чухне ун çине 1.000 тонна бомба пăрахнă.

Бордо районĕнчи аэродромсене тапăннă чухне бомбăсем тӳрех лекнине палăртнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Берлина январĕн 5-мĕшĕ ыран теллĕ чух çĕрле тапăннă чухне Гитлерăн канцелярине ишнĕ.

СТОКГОЛЬМ, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем халăх Берлинран йышлăн тарни çинчен пĕлтереççĕ. Таракан халăха полици тытса чараймасть. Берлинри нумай предприятисенче рабочисен шучĕ икĕ хут чакнă. Хулари халăха апатçимĕç парса тăрас ĕçре йĕрке пĕтнĕ, мĕншĕн тесессĕн апат-çимĕçсен нумай склачĕсем çунса кайнă тата хулара транспорт ĕçлемест.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăваканĕ П. Т. ЗОЛОТОВ.

ШУПАШКАРТИ РАДИОТОЧКĂСЕМПЕ УСĂ КУРАКАН ОРГАНИЗАЦИСЕМПЕ УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ, ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ТАТА ГРАЖДĂНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА:

Радиоточкăсене тепĕр хут çыртарасси 1944 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче вĕçленет.

Радиоточкăсен хуçисен 1944 çулта радиоточкăпа усă курма право уйни çинчен кивĕ удостоверени çине паллă тутарас пулать е çĕнĕ удостоверени илес пулать.

Радиоточкăсене радиоузел кассинче кашни кун ирхине 8 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетчен çыраççĕ.

Январĕн 15-мĕшĕ иртсен, пырса çыртарман радиоточкăсене каялла илеççĕ.

РАДИОУЗЕЛ ДИРЕКЦИЙĔ.

1943-мĕш çул вĕçленнĕ май, Чăвашпромстрахкасса хăйĕн системинче кĕрекен мĕнпур промартельсене декабрь уйăхĕшĕн расчет ведомоçĕсене январĕн 10-мĕш кунĕччен тăратма тата январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăвашпромстрахкасăран мĕн чухлĕ илмеллипе е ăна мĕн чухлĕ памалла пулнине январĕн 15-мĕш кунĕччен тĕрĕслесе тухма хушать.

Çав срок иртсен, çак тĕлĕшпе нимепле претензисене те йышăнмаççĕ.

ЧĂВАШПРОМСТРАХКАССА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 506 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.